Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

28 (7560) № * Шăмат кун, 2008 çулхи апрелĕн (ака) 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Чăваш Ен Тĕнче кубокне йышăнма хатĕрленет

Ытлари кун ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров хăвăрт утакансен 23 Тĕнче кубокне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республика йĕркелӳ комитечĕн ларăвне ирттернĕ.

Тĕнче кубокне хутшăнакансенчен заявкăсем йышăнмалли кампани апрелĕн 25-мĕшĕччен пырать. Пирĕн республикăна пиншер хăна килĕ. Çав шутра – тĕнчери 60 ытла çĕршыв спортсменĕсем, судйисем, официаллă представителĕсем. Республикăна Раççей регионĕсен йышлă представителĕсем те килеççĕ.

## Ватăсемпе ачасене пулăшма

Юн кун ЧР Министрсен Кабинечĕ «Халăха социаллă пулăшу паракан учрежденисен пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетесси, ватлăхра тата инвалид пулса пенсие тухнă ĕçлемен пенсионерсене Раççей Федерацийĕн Пенси Фончĕн тата Чăваш Республикин республика бюджечĕ шучĕпе 2008 çулта адреслă социаллă пулăшу парасси çинчен» программине ырланă.

Унта РФ Пенси фондĕнчен социаллă учрежденисене тата ĕçлемен пенсионерсене адреслă пулăшу пама регионсене субсидисем уйăрма палăртнă. Пĕтĕмĕшле республика бюджетĕнчен тата РФ Пенси фондĕнчен 15 миллион та 162 пин тенкĕ уйăраççĕ.

Çур аки – 2008

## Ака-суха ĕçĕсем пуçланчĕç



*Иртнĕ кунсенче районта çурхи ака-суха ĕçĕсем пуçланчĕç: Суворов яч. хис., Ленин яч. хис., «Ударник», «Герой», Чкалов яч. хис., «Оринино» хуçалăхсем нумай çул ӳсекен курăксене апатлантарма тата çав анасем çинче сӳрелесе нӳрĕк тытма тухрĕç. Çав вăхăтрах Бархаткинпа Матвеевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кĕрхи культурăсене апатлантарас ĕçе вĕçлерĕç. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене илсен ку енĕпе паян Суворов яч. хис. хуçалăхра çеç ĕç пырать.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Николай Максимов механизатор (сулахайри) «Свобода» хуçалăх хирĕсенче кăçал 13-мĕш çур аки тăвать. Хăйне шанса панă МТЗ-1221 трактора тата кăкарса ĕçлемелли хатĕрсене ĕçе тĕплĕ хатĕрленĕ вăл. Вĕсем юлташĕпе иртнĕ кĕркунне çар службинчен таврăннă та кăçал пĕрремĕш çуракаине хутшăнакан Саша Степанов водительпе ĕç условийĕсемпе паллашнă.*

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Район хаçачĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!

Хаçат-журнал пурнăçра пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эсир халăха тĕрлĕ енлĕ çĕнĕ хыпарсемпе паллаштаратăр, пурнăçри çивĕч ыйтусене хускататăр, воспитани пĕлтерĕшлĕ материалсемпе шухăша яратăр, пурнăçра тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума хистетĕр. Хăвăрăн пултарулăхăрпа район хаçачĕ вулаканшăн кĕтнĕ хăна, вăл интереслĕ пултăр тесе тăрăшатăр. Çакна «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат кăçалхи февраль уйăхĕнче Мускаври иртнĕ «Пресса» курава хутшăнни те çирĕплетсе пачĕ. **Муркаш районĕн хаçачĕ унта «Прессăн ылтăн фончĕ» паллăна илме тивĕç пулчĕ.**

Сире çак чыса тивĕçнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатăп. Эсир малашне те хаçата татах та интереслĕрех кăларасса, вулакансен йышне татах ӳстерессе шанатăп. Кăçалтан пуçласа Чăваш Республикинчи муниципаллă районсем хушшинче ирттерекен экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсен шутне периодика изданийĕсене мĕнле çырăнтарассине те кĕртнĕ, çав шутран – район хаçачĕн тиражĕ мĕн чухлĕ пулнине те шута илеççĕ. Çакă хаçат редакцийĕн коллективĕн яваплăхне татах та ӳстерме хистет. Çавăнпа та сире хаçат районти кашни киле çиттĕр тесе хăвăртан килнине йăлтах тума, районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче курăмлă утăмсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. Пултарулăхăр вĕçĕ-хĕррисĕр пултăр, ĕçлес кăмăл ӳссех пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен район пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ларăвĕнчен

## Тирпейлĕх пĕр хамăртан килет

Çак кунсенче район пуçлăхĕ çумĕнчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен Канашĕ йĕркеленчĕ.

–Асăннă канаш районти çивĕч ыйтусем пурнăçа мĕнле кĕнине пăхса тухнипе пĕрлех кулленхи ĕçсем епле пынине те куçран вĕçертмĕ, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов асăннă канашăн пĕрремĕш ларăвне уçнă май.

Пĕрремĕш ыйтупа вара паян районта çивĕч тăракан ыйтусенчен пĕрне пăхса тухрĕç – тавралăха тирпей-илем кĕртесси, ял тăрăхĕсенчи экологи тĕлĕшĕнчи хăрушсăрлăх. Ку ыйту мĕншĕн çивĕч пулнине хăвăр ял хушшипе утса кайсан та тӳрех ăнланма пултаратăр. Паян юр ирĕлсе пĕтнĕ май мĕн пур тирпейсĕрлĕх куç умне тухать. Пур çĕрте те субботниксем ирттернĕ теме те пулмасть. Ку ĕçе паян кулленех тумалла. Кунта Юрий Александрович сăмахĕпе ниепле те килĕшмесĕр тăма май çук:

–Тирпей-илем ыйтăвĕ паян çур акине ирттересси пекех чи малтан татса памалли ыйту шутланать.

Кăçал пирĕн районта Республика кунне ирттернипе çеç çыхăнман çакă. Хамăр пурăнакан вырăна таса тытни хамăра хисеплени пулать. Çавăнпа та пуçтарăнакан çӳп-çапа ăçта хумалли те паян кашни ял тăрăхĕнче пуç ыраттаракан ыйту пулса тăрать. Кашни ял тăрăхĕнчен илсе тухнă çӳп-çапа районта уйăрнă вырăна пырса тăкни ыйтăва татса пани мар. Çавăнпа та асăннă канашăн ларăвĕнче кашни ял тăрăхĕнче çӳп-çап тăкмалли вырăн тумаллине палăртрĕç. Анчах та ку килти пур ăпăр-тапăра унта кайса тăкмаллине пĕлтермест. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин ларура çакна палăртрĕ: кивĕ хута, туратсене – мĕн çунма пултарнине çунтармалла. Шăвăç банкăсене, специалистсем каланă тăрăх, çимĕç паракан йывăçсен айне чавса чикни усăллă, тимĕр çителĕклĕ пулать вĕсемшĕн. Кĕленче ванчăкĕ строительствăра усăллине палăртаççĕ. Мĕн çунманнине, çунтарма юраманнине вара ятарлă вырăна илсе тухассине йĕркелемелле.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

«Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» марафон пырать

## Ырăлăх çăл куçĕ тапсах тăтăр

Ыр кăмăллăхăн вĕçĕ-хĕрри те çук, теççĕ. Çакă тĕрĕсех пулĕ. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисем паян ачаллă çемьесене пулăшас тесе утăм хыççăн утăм тăваççĕ. Çав хушăрах кӳршĕре, пĕр ялта пурăнакансем пĕр-пĕрне кăмăлтан панă пулăшу та нихăçан та ытлашши мар. Районти 4277 çемьере паян 7028 ача ӳсет. Вĕсем хушшинче сахал тупăшлă çемьесем те пур. Апла пулсан çав пулăшу шăпах вырăнлă. Мĕн чухлĕн тата паян ют ачасене хăйсен чун ăшшине паракансем. Районти 80 ача паян опекунсемпе пурăнать. Тĕрлĕ сăлтавсемпе тăван ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнăскерсене 62 çемьере хăйсен çуначĕ айне илчĕç. Çакăн пек ытарайми ырă чунлă çынсем пур пулсан, пирĕнтен кашниех çав ăшша, пулăшăва пама пултарнине иртнĕ çулхи «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ача-пăча марафонĕ те çирĕплетсе пачĕ. Ун чух районта 94 пин тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ. Кунсăр пуçне – тумтирсем, çимĕçсем.

Кăçалхи марафона иртнĕ ытлари кун районти Культура çуртĕнче уçрĕç. Уява нумай ачаллă çемьесене чĕннĕ. Муркаш райповĕн ĕçченĕсем уява килнисене пурне те пылак çимĕçпе, тутлă шывпа хăналарĕç. Кунтах ачасем ăсталанă хатĕрсенчен йĕркеленĕ «2008 çул – Ырă ĕçсен çулталăкĕ» куравĕ те ĕçлерĕ.

–Паян çакăнта уçнă марафон кашни ял тăрăхне, кашни киле çиттĕр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă аталану енĕпе ĕçлекен çумĕ - культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева, марафон уçнă ятпа саламланă май.

Чунтан хатĕрленĕ парнесем вара чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕнчен Ю.А. Ивановран пулчĕç: кашни ял тăрăхĕнчен килнĕ пĕрер нумай ачаллă çемье вырăн хатĕрĕсен пуххине тивĕçрĕ.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова каланă тăрăх, çулталăк тăршшĕпех социаллă хӳтлĕх пайне ача тумтирне илсе килсе паракансем татăлмаççĕ. Патшалăх ача пур çемьесене паракан пулăшусем çинче чарăнса тăнă май Нина Пантелеевна социаллă хӳтлĕх пайĕпе социаллă пулăшу паракан центр ĕçченĕсем марафон счечĕ çине 1600 тенкĕ укçа куçарни пирки пĕлтерчĕ.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

Юбилей

## *Саламлатпăр*

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, кукамая, çывăх тăвана – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Валерия Ивановна КАЗАМБАЕВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тулли телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эсĕ пурри пире савăнтарать, вăй-хăват парать. Эпир сана хисеплетпĕр, юрататпăр.

Кăмăлу яланах хĕвел пек ăшă, уйăх пек çутă пултăр, пурнăçу тинĕс пек тăрă, уй-хир пек тулăх килтĕр.

**Чĕререн юратса: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем Сергей, Анастасия, Андрей тата çывăх тăванĕсем.**



Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Людмила Тимофеевна ИШАКОВАНА** ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, питкуçунта çепĕç кулă çиçтĕр. Телейлĕ пул, утас çулу такăр пултăр, пурлăху та, юлташусем те хушăнсах пыччăр. Ырă кăмăл, чун ăшши, çав вăхăтрах çирĕп вăй-хăват ан иксĕлччĕр санра.

**Салампа: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, юлташĕсем, пускилсем.**



Юнкă ялĕнче пурăнакан **Николай Порфирьевич МАРЯШКИНА** апрелĕн 12-мĕшĕнче (Космонавтсен кунĕнче) 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. 30 çул хушши Юнкăри вăтам шкулта ĕçлерĕн. Çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн, «Зарница» тата «Орленок» вăййăсенче районта тата республикăра мала тухнăшăн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» ята илме тивĕç пултăн. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, телейлĕ пул, ĕмĕтленни çитсе пытăр, утас çулу такăр пултăр. Çакна эс чăннипех тивĕçлĕ.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 6 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, кӳршисем.**



Шарпашра пурăнакан **Виталий Петрович МАРКОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан мĕн пур ырă сăмахсемпе саламлатпăр.

Кун-çулу сан вăрăм та телейлĕ, сывлăху çирĕп пултăр. Инкек-синкек сан çывăхна та ан пытăр. Ăнăçу умри çулна уççах пытăр. Эпир вара саншăн – хамăрăн чи çывăх çыншăн – яланах савăнатпăр, сана юрататпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

**Мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕ, кĕрӳшĕ, кинĕ, мăнукĕсем.**

Йышăну

## Йывăç лартассипе уйăхлăх иртет

Чăваш Республикин Президенчĕн 2007 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнчи «Республика Кунне 2008 çулта ирттересси çинчен» указĕпе тата 2005 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Йывăç кунне ирттерме йышăннине пурнăçласа иртнĕ эрне вĕçĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ака уйăхĕн 10 – çу уйăхĕн 10-мĕшĕсенче районта йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх ирттерме йышăну турĕ, ĕçсен планне çирĕплетрĕ. Уйăхлăхра эрозипе кĕрешес ыйтăва тĕпе хуни курăнать. Çак тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайне вырăнсенчи ял тăрăхĕсемпе килĕшсе ял хуçалăх предприятийĕсемпе тата организацийĕсемпе калаçса татăлса йывăç лартмалли вырăнсене палăртма тата мĕн чухлĕ лартмаллине пăхса хăварма хушнă. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă указпа килĕшӳллĕн хăйсен территорийĕсенчи предприяти-организацисен ертӳçисемпе ялсемпе хăйсем вырнаçнă территорисене тирпей-илем кĕртме пĕрле ĕçлемелли пирки каланă. Ку ыйту вара кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта.

Мĕнех, уйăхлăха активлă хутшăнса йывăççсем ытларах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар. Уйăхлăх ĕçĕ район хаçачĕн страницисенче курăнсах тăрĕ.

**А. БЕЛОВ.**